**Олимпиадные задания по чувашскому языку и литературе
для муниципального тура республиканской олимпиады
школьников общеобразовательных организаций
с изучением чувашского языка
2017-2018 учебный год. 10 класс**

*Максимальный балл – 50*
*Время выполнения – 120 минут*

***Текста вулăр, хушнă ĕçсене тăвăр.***

(1)Тул çутăлма пуçланă. (2)Çырма-çатраллă, тăвайккиллĕ, айлăмсемпе тӳрем çĕр лаптăклĕ Атăлпа Сăр шывĕ хушшине вырнаçнă Чăваш çĕр-шывĕ ерипен ыйхăран вăранса пырать. (3)Васансемпе шырлансенче çĕрĕпе шăнкăртатнă шыв сасси çумне кайăк-кĕшĕк чĕвĕлтетни, вылькăх-чĕрлĕх ĕнĕрлени, уçăлса хупăнакан алăк-хапха чĕриклетни, йытă вĕрни, автансем каçса кайса авăтни, çынсем çуйхашни тата ытти çĕр тĕрлĕ сасă хушăнать.

(4)Çав вăхăтра Хусан енчи хĕрлĕ сăн çапнă мамăк пек çăмăл пĕлĕтсем тĕлне хура хăю евĕрлĕ тĕксĕм йĕр тухса карăнчĕ. (5)Çав йĕр пăртан тасалма хатĕрленсе çитнĕ Атăл тăрăх шăвăнса Чăваш Республики патне çывхарать. (6)Ку – хур кайăк карти. (7)Çирĕм виçĕ хур кăнтăрти шыв-шурта хĕл каçнă хыççăн Çурçĕрти Пăрлă океан патне çитсе çын çук тундрăра йăва çавăрма васкать. (8)Çуркунне кая юлса килнĕ пирки ăшă çĕрсенче хĕл каçнă кайăксен кăнтăрта ытларах чарăнса тăма лекрĕ. (9)Халĕ ĕнтĕ Аçтăрхантан пуçласа Архангельска çитиччен пур çĕрте те юр хăвăрт ирĕлет. (10)Пирĕн патра çу каçакан кайăксем Африкăпа кăнтăр Азирен кунта килме васкаççĕ.

(11)Çирĕм виçĕ хур кайăклĕ карта та çĕрĕпех Атăл тăрăх куçнă…(12)Карта пуçĕ, ушкăнри чи ватă хур, хăй ĕмĕрĕнче Шурă тинĕспе ытти тинĕссем хушшинче каллĕ-маллĕ темиçе хут вĕçнĕскер, вăрăм çула тухсан канма ăçта чарăнмаллине пĕлет. (13)Халĕ те вăл Куславккаран иртсенех тăванĕсене Атăлăн сылтăмри чăнкă çыранĕ енне пăрчĕ. (14)Инçетре ейӳ кайнипе тем тери сарălнă анлă шыв тӳлеккĕн чӳхенсе юхать. (15)Ку – Çавал шывĕ. (16)Вăрăм мăйĕсене малалла тăсса, хĕрлĕ урисене хуçлатса вĕçекен хурсем кану çывхарнине сисрĕç пулмалла – хаваслансах какалама тапратрĕç.

(17)Ка-ка-ка-как! Ка-ка-ка-как! – теççĕ вĕсем.

1.Текстран шыв-шур ячĕсене çырса илĕр, вĕсене вырăсла куçарăр.

2. Текстра евĕрлев сăмахĕ тупăр. Евĕрлев сăмахĕнчен глагол тăвăр та ăна вырăсла куçарăр. Евĕрлев сăмахĕнчен пулăннă тепĕр тăватă глагол çырăр.

3. 10-мĕш предложенире подлежащи тупăр, Унăн ыйтăвне çырăр, мĕншĕн çапла пулнине ăнлантарăр.

4. 4-мĕш предложенири паллă ячĕсене çырса илĕр, вĕсен антонимĕсене (палăртма май пуррисенне) тупăр.

5. Мăшăр сăмахсем тесе мĕнле сăмахсене калаççĕ? Вĕсем мĕнле пĕлтерĕшлĕ? 1-10-мĕш предложенисенчен мăшăр сăмахсене çырса илĕр.

6. Что такое памфлет? Приведите пример из чувашской литературы. Назовите автора.

7. О ком идет речь?

«Из миллиона чуваш и черемис я первый писатель в России. Следует и из них кому-нибудь писать для общей пользы».

8. Из какого произведения эти строчки? Назовите автора и жанр произведения.

*В дом родимый бы прийти,*
*Милых детушек обнять.*
*До седых волос дожить,*

*А когда придет конец,*
*На своей постели мне*
*Тихой смертью бы почить.*

9. По основным этапам определите, о ком идет речь? Напишите полностью фамилию, имя, отчество.

1) детство; 2) учеба; 3) монашество; 4) наука; 5) заточение; 6) старость.

10. Напишите синквейн со словом *экологи* (на чувашском языке)